КПРФ
РОССИЯ · ТРУД · НАРОДОВЛАСТИЕ · СОЦИАЛИЗМ

# Чăнлăх (Правда)

№ 1 (43) 2024 çулхи мартăн 6-мĕшĕ

КПРФ Чăваш рескомĕн хаçачĕ

*«Раççей Федерацийĕн Коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикин уйрăмĕ*

## МАРТĂН 15-17-МĔШĔСЕНЧЕ – РФ ПРЕЗИДЕНЧĔН СУЙЛАВĔ



Иртнĕ кану кунĕсенче КПРФ респкомĕ пуçарнипе – Шупашкарта тата Патрьелĕнче – КПРФ райкомĕсен пĕрремĕш секретарĕсемпе районсенчи тĕп суйлав комиссийĕсен тата суйлав участокĕсен членĕсен ĕçлĕ тĕлпулăвĕсем иртрĕç. Вĕсенче вырăнти парти активĕпе пĕрле Республикări тĕп суйлав комиссийĕн членĕ Олег Владимирович Павлов тата Патшалăх Думин депутачĕ Ирина Анатольевна Филатова хутшăнни парти активне ку чухнехи пысăк лĕлтерĕшлĕ суйлава пур енчен те тĕрĕс, Законсене тата суйлавçăсен прависене туллин шута илсе ирттерес ыйтусене пур енчен уçăмлатрĕç.




Мускав облаçĕнчи Щелково хулинчи тĕл пулу

# Ленинпа пĕрле – Çĕнтерÿ патне

## Коммунистсем çĕнеççĕ

Çĕршывпа ертсе пыракан В.В.Путин Президент 2005 çултах СССР саланса кайнине çирĕммĕш ĕмĕрти тĕнче кисренĕвĕпе танлаштарчĕ. Халĕ те хăшпĕр чухне, çивĕч ыйтусене Совет Союзĕнчи опытпа усă курса, татса пама кирлине палăртать. Калăпăр, ют патшалăхсенчи хăш-пĕр предприятисене национализацилес (халăх аллине парас) енĕпе. Çамрăксен юхăмĕсене, пионерсем майлăрах, йĕркелесе пырать. Хĕрлĕ лапамра Сталин тапхăрĕнчи евĕрлĕ спорт парачĕсем иртеççĕ. Анчах вăл кăна çителĕксĕр! **Çĕршыв аталанăвĕн çул-йĕрне тĕпренех ылмаштармалла.** Раççей киревсĕр капитализм йĕркипе унчен мĕнле пурăннă – çаплипех: пуянсем çав-çавах мул пухаççĕ, чухăнсем çука юлса пыраççĕ.

Малашлăха татăклăн палăртаймасăрах, çĕршыв 33 çул ĕнтĕ, пурнăça аран-аран сыпăнтарса пырать. Мĕнле çул-йĕр суйласа илессине татса пама вăхăт çитнĕ. **Ятарлă çар операцийĕ хыççăн пурнăç мĕнле пулĕ-ши?**

Çакă паллă: Ельцин-Гайдар тытса пынă çул-йĕре, 90-мĕш çулсенчи киревсĕр пулăмсене тĕппипех пăрахçламалла. Çĕршывăн чи çÿлти шайĕнче Хĕвеланăçĕнчен килекен идейăсене йăлтах пăрахăçламалла.1991 çулхи йăнăшсене йышăнса, **Раççей çĕнĕ социализм çулĕ çине тухмаллине çирĕплетмелле.**

Эпир Социализмла Раççейре ĕç, пĕршухăшлăх, пĕр-пĕрне пулăшасси мулран пĕлтерĕшлĕрех пултăр тесе тĕллевсем палăртнă. Капитал тата олигархсен сулне пÿлетпĕр, ĕçлекен çын хăйне тивĕçлĕ социаллă çăмăллăхсемпе тÿлевсĕр усă курма пуçлать. Халăх килĕштерекен тăнăçлăх, ырăлăх яланхи йĕрке пулса тăрать. Çакă пирĕншĕн пĕтĕмпех паллă. Апла пулсан пирĕн тĕллевсене пурнăçлатпăрах.

# *Раççей халăхĕ хальхинчен темиçе хут пуян пулма тивĕç*

***КПРФ Тĕп Комитечĕн председателĕ, Патшалăх Думинчи фракци ертÿçи тата черетлĕ суйлавра Раççей Президентне суйлама тăратнă Николай Михайловичă Харитоновăн суйлав штабĕн ертÿçи Геннадий Андреевич Зюганов нумаях пулмасть Патшалăх Думинче тухса калаçрĕ тата «Хĕрлĕ лини» канала интервью пачĕ. «Раççей халăхĕ хальхинчен темиçе хут лайăхрах пурăнма тивĕç», – тесе пусăмлăн палăртрĕ вăл.***



2024 çул пуçланнă-пуçланманах çĕршывра политикăлла лару-тăру нихçанхинчен те ытларах вăйланчĕ. Эпир çакна туйса тăратпăр, капитализмла çĕршывсенче пĕтĕмĕшле лару-тăру хăвăрт япăхланса пырать. Пур çĕрте те ырăлăхпа тĕрĕслĕх тата аталану вăйĕсем хушшинчи хирĕçÿсем çивĕчленеççĕ. Анчах çакна çирĕплетсех калама пулать: пĕтĕмĕшле лару-тăру, кирек мĕнле пулсан та, Украинăри пирĕн çĕнтерÿпе ытларах çыхăннă. Апла пулсан, ырă пуласлăх эпир Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсемпе тачă çыхăннă нацизма çĕнтернинчен килет. Çапла вара:

– **пĕрремĕшĕнчен – çĕршывра чăн-чăн Çĕнтерÿшĕн пыракан юхăма вăйлатас енĕпе мĕнпур вăйсене пĕрлештермелле;**

– **иккĕмĕшĕнчен – обществ çакна çирĕп ăнланса илмелле, мĕншĕн пирĕн епле пулсан та Çĕнтерÿ тумалла е вăрçăра выляса яни мĕн тери хăрушлăх патне илсе пынине тĕптĕрĕс пĕлмелле;**

– **виççĕмĕшĕнчен – влаç ним тăхтаса тăмасăрах çĕнĕ технологисене хăвăрт алла илмелле тата ĕçе кĕртмелле.**

Чăннипе илсен, Çĕнтерÿ тума Раççейĕн пурте çителĕклĕ. Шăпах çакна шута илсе, КПРФ яланах çакна çирĕппĕн аса илтерет: вĕрентÿпе воспитанисĕр, наукăпа техникăри çĕнĕлĕхсемсĕр хăвăрт малалла кайма çук.

Раççее хирĕç йĕркеленсе тата вăйланса пыракан виççĕмĕш Антанта вăй илет. Иккĕшĕнче эпир чиперех çĕнтертĕмĕр. Ун чухне пире Ленин идейисем тата Ленинпа Сталинăн çĕнетÿ программи пулăшса пынă. Вĕсемпе хавхаланса ют çĕршыв империализмĕ халăха пусмăрлассине сирсе ярсан, 1945- мĕш çулта Аслă Çĕнтерÿ тума, тĕнчере пĕрремĕш пулса космоса парăнтарасси патне илсе çитернĕ. 1970-мĕш çулсенче СССР ракетăпа ядерлă хăрушлăхăн шанчăклă хÿтлĕхне туса хунă. Вăл пире паян та упраса пырать. Эпир халĕ «Малашлăха – Ленинпа пĕрле!» программăпа çине тăрса ĕçлетпĕр. Вăл социализм çулĕсенче тунă мăнаçлăхпа капашсăр пысăк çитĕнÿсене пĕтĕмлетсе çирĕплетет тата çĕршыва ăнăçлă аталантармалли майсене уçăмлăн кăтартса парать.

Малалли 2 стр.

# Мӗн кӗтет халӑх Президент суйлавӗнчен?

Ҫак ыйту паян кашни ҫыннах каҫтарать: лавккара та, килте те, суйлав ирттернӗ май йӗркеленекен тӗрлӗ мероприятисенче те. Ҫавна шута илсе эпир сулавҫӑсенчен (пурне те сасӑлава каймалли ҫинчен систерсе) ытлахӑшне хумхантаракан хӑш-пӗр сӑлтавсене те пулин пӗтӗмлетекен хуравсем илме тӑрӑшрӑмӑр.

**Президент хутшӑннипе хаксене йӗркеллӗ, вӑрах вӑхӑт пӗр пекрех тытса тӑма пулать-и?**

Хурав паракансенчен ытларахӑшӗ:

**Ҫуллӑ ҫынсем:** – Пулать. Влаҫра Патшалӑха малалла аталантарас тата халӑха упрас-пулӑшас текенсем ытларах пулмалла. Хальхи вӑхӑтра унта нумайӑшӗ пуянсем е хӑйсем те предприниматель картӗнче пулни кирек мӗне те (ӗҫе е мӗнле те пулин пулӑшӑва) сахалтарах сутса-вырнаҫтарсах, вӑй хурсах нумай тупӑш (калӑм) илме хапсӑнакансем йышлӑ. Ҫавна май чи пӗлтерӗшлӗ тавар-продукци хакӗсене туххӑмрах ирӗке янине курмӑш пулаҫҫӗ е чарса лартас тесе йышӑну тума васкамаҫҫӗ. Калӑпӑр, ял хуҫалӑхӗнче шӑпах акасуха тунӑ вӑхӑтра е тыр-пулпа ытти культурӑсене пухса кӗртнӗ тапхӑрта ҫунтармалли-сӗрмелли материалсен хакне ӳстерсе яраҫҫӗ те, ытти япаласен хакӗсем хӑйсемпе хӑйех куҫ хупса иличчен, хӑпарса каяҫҫӗ.Тӗслӗхрен, ҫӳлте те, регионсенче те кӑҫалхи пӗрремӗш ҫур ҫулта коммуналлӑ хуҫалӑх пулӑшӑвӗшӗн хывакан тӳлевсем ҫаплах юлаҫҫӗ, терӗҫ. Анчах ҫакна та шанса пӗтерме хӗн. Нумай ҫуртсенче пурӑнакансен ҫурт-йӗрӗн тӗп юсавӗшӗн январь уйӑхӗнчех пӗлтӗрхинчен 25 процента яхӑн ытларах тӳлеме тивнӗ.

**Ҫамрӑксем чылайӑшӗ.** Эпир килте сахал пулатпӑр. Ӗҫ шыраса таҫта та ҫитсе калӑм пекки тӑватпӑр та, хӑш-пӗр хаксене ҫийӗнчех туймастпӑр. Тӳлевсемпе атте-анне е кукаҫей-кукамай татӑлать. Хаксемпе пӗрле вӗсен пенсийӗ те кӑштах хӑпарать вӗт.

**Ача-пӑча (самай ӳснисем).** Пире атте-анне тумлантарать, садике е шкула та машинӑпа леҫет.

**Мӑшӑрӗсенчен пӗри, тепри – аякра ӗҫлекенсем (пуртех мар та):** – Халӗ ҫемье ҫук тесен те юрать пулӗ. Ҫавӑнпа пур ҫӗрте те производствӑна (завод-фабрикӑсемпе ытти формӑллӑ ӗҫе) хӑварт хута ямалла. Вырӑнта ӗҫ пулсан укҫи-тенки те пухӑнать, ҫемье те тӗреклӗрех пулать, ача-пӑча ҫуратасси те ӳсет. Ҫын йышлӑ вилесси те майӗпен те пулин чакатех. Пирӗн кунта Г.А.Зюганов журналистсен умӗнче каланӑ сӑмахсене палӑртас килет: «Пирӗн экономикӑна хӑварт аталантармалли чӑнчӑн ӳсӗм ҫулне татӑклӑн палӑртса ҫирӗплетмелле. Юлашки вунӑ ҫул вӑл ҫултаlӑкне 1 процент таврашӗнче анчах хушӑнкаларӗ. Пӗлтӗр 3,5 процента ҫитрӗ те правительствӑри финанспа экономика ушкӑнӗ ӑна касса татрӗ: кредитсен процентне 16 процент таран ӳстерчӗ! Ҫавна пула тенкӗ хӑвӑртах 80 процент йӳнелчӗ, укҫа ҫаврӑнӑшӗ 53 процент анса ларчӗ. Ҫав вӑхӑтрах, пирӗн олигархсем иртнӗ икӗ ҫулта кӑна ҫӗршывран 300 миллиард доллар ытла илсе тухнӑ. Ҫак иртӗхӗве пӗр хутчен татӑклӑ йышӑну тунипех пӳлсе лартма пулать.

Татӑклӑ ӗҫе промышленноҫа аталантарнинчен пуҫламалла. Анчах правительство структури хальхи йывӑр лару-тӑрупа килӗшсе тӑмасть. Президент Хусанти авиаци заводӗнче пулнӑ чух Горбунов директор пур енчен те илӗртекен стратегиллӗ Ту-160 бомбардировщик кӑтартрӗ. Вӑл 1984 ҫулта конвеертан тухнӑ! Паян та чи лайӑх самолет. Иртнӗ 40 ҫул хушшинче вара никам та унтан лайӑхрах, курӑмлӑрах машина кӑларман. Эпӗ пулсан, тахҫанах ку чухнехи виҫӗ министерство – авиаци промышленноҫӗ, электороника тата станоксем тӑвакан министерствӑсем йӗркеленӗ пулӑттӑм.

# *Раҫҫей халӑхӗ хальхинчен темиҫе хут пуян пулма тивӗҫ*

*Вӗҫӗ. Пуҫламӑшӗ 1-мӗш стр.*



**Чӑваш Енри коммунистсен делегацийӗ видеокурав майӗпе иртнӗ Пӗтӗм Раҫҫейри коммунистсен уҫӑ пухӑвӗнче**

Ҫапла тусан ҫеҫ эпир ҫӗршывра ҫӗнӗ ӑнаҫлӑхсем тума пултаратпӑр. Вӑлах Раҫҫейӗн пинҫуллӑхлӑ историне пӗтӗмлетсе сыхласа хӑвармалли ҫул-йӗре уҫса парать.

В.И.Ленин 1922 ҫулхи декабрьте Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗ йӗркеленни ҫинчен пӗлтерсе ҫӗршыв пӗрлӗхне темиҫе хут ҫирӗплетнӗ. Ҫав пӗрлӗх ҫӗршыва пур енчен те вӑйлатасси, пӗтӗм халӑхсем – вырӑссемпе украинецсен, белоруссемпе грузинсен, казахсемпе узбексен, армянсемпе азербайджансен туслӑхӗ – пурте, пӗтӗм халӑх, Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫинчи пысӑк ҫӗнтерӗве туптаса ҫирӗплетнӗ.

Ҫаксене шута илсе тата пӗтӗмлетсе, аслӑ ӑрусен опытне никӗсе хурса, КПРФ производство аталанӑвӗпе наукӑна ҫӗнӗрен ҫӗклемелли принципсене тата Ҫӗнтерӳ Программине хатӗрлерӗ. Вӑл бюджета аталантарса вӑйлатма, «Вӗренӳ пуриншӗн те» закона ӗҫе кӗртме, халӑх предприятийӗсен ӑнаҫлӑ опытне анлӑн сарма тивӗҫлӗ. Орелта иртнӗ тӗнчери экономика форумне хутшӑннӑ экономистсем пурте – академиксем, экспертсем, производство ертӳҫисем – ӑна туллин ырларӗҫ..

Шел пулин те, Патшалӑх Думинче (унта ытларахӑшӗ «Пӗрлӗхлӗ Раҫҫей» членӗсем) хальлӗхе чылай депутат эпир сӗннӗ проектпа килӗшмерӗ.

Пирӗн программӑна йышӑннӑ пулсан Раҫҫей бюджечӗ 45 триллион тенкӗпе танлашмаллаччӗ. Ҫакӑ «Пӗрлӗхлӗ Раҫҫей» сӗннинчен 10 триллион ытларах. Ҫапла вара эпир промышленноҫпа яла, наукӑпа вӗренӗве, социаллӑ программӑсене аталантарма икӗ хут ытларах укҫа-тенкӗ хываттӑмӑр. Ачалӑхпа ашшӗ-амӑшне туллинрех пулӑшмалли, ҫӗршывра халӑх йышлӑн вилессине хӑварт чакармалли майсем уҫӑлатчӗҫ.

Раҫҫей тӗрлӗ ҫӗрте пыракан гибридлӑ вӑрҫӑ мӗншӗн пынине тӗрӗс хурав памалла. Чи малтан экономика, наукӑпа техника, социаллӑ пурнӑҫпа демографи ыйтӑвӗсене татса панӑ чухне.

Анчах хальлӗхе ертсе пыракан ушкӑнсен тӗллевӗсем ҫакӑнпа килӗшсех тӑмаҫҫӗ. Вӗсенчен ытларахӑшӗ истори юхӑмӗнчен айккинче юласшӑн, либералсем сӗннӗ пек пурӑнасшӑн.

**Ҫакна яланах асра тытмалла:икӗ тӗрлӗ политика никама та ӑнӑҫу тата ҫӗнтерӳ кӳмест.** Капитализм системине сивленипе кӑна ӑнӑҫу тума май ҫук. Ертсе пыракан ушкӑнсем ӗҫ ҫынни майлӑ пулма, халӑх ирӗклӗхне туйма хӑраҫҫӗ. Ҫавна пула вӗсем КПРФ ҫине тапӑнаҫҫӗ, профсоюзсен ӗҫне пӳлсе пыраҫҫӗ, советсене хирӗҫлисене – чармаҫҫӗ. Йышлӑ ҫынсен хирӗҫлевне пӑхмасӑрах Ельцин-центр малалла ӗҫлет. Ҫак ҫулпа кайсан ӗҫсӗрлӗхрен, чухӑнлӑхран, ҫынсем пӗр-пӗринпе хирӗҫессинчен тата коррупцирен ниепле те хӑтӑлма ҫук. Асӑннӑ пулӑмсемпе килӗшсе тӑни Хӗвеланӑҫ тапӑнӑвне сирсе ярассинче вилӗмле хӑрушлӑх кӳрет.

Эпӗ КПРФ тата ун майлисем палӑртнӑ Ҫӗнтерӳ Программин малашлӑхӗ пысӑккине ҫине-ҫинех ҫирӗплететӗп. Пирӗн тӗрӗс те сумлӑ ӗҫ – политикӑри, депутатсен ӗҫ-хӗлӗн, наукӑпа тӗпчеве вӑйлатмалли витӗмлӗ никӗс пулса тӑрать. Шӑпах ҫак никӗс ҫинче ӗҫлесе нумай ертӳҫӗсемпе регионсем пур енӗпе те ҫитӗнӳ турӗҫ тата вӗсене ҫирӗплетсе пыраҫҫӗ. Тӗслӗх вырӑнне Новосибирскри Анатолий Локоть, Иркутск облаҫӗнчи Сергей Левченко, Орел облаҫӗнчи Андрей Клычков, Хакасири Валентин Коновалов, Ульяновск облаҫӗнчи Алексей Русских ертӳҫӗсене илсе кӑтартма пулать.

КПРФӑн пысӑк опытне Примаков-Маслюков коммунистсем ертсе пынӑ правительство ҫӗршыва 1998 ҫулхи дефолтран (патшалӑх ҫуклӑха юлнинчен) ҫӑлса хӑварни те аван кӑтартса парать. Павел Грудинин, Иван Казанков, Иван Богачев, Илья Сумароков ертсе пыракан пӗрлӗхлӗ предприятисен ырӑ ячӗ ҫӗршывӗпех сарӑлса пыракан опычӗ те ҫавнах ҫирӗплетет.

Хамӑрӑн ырӑ программӑсене хатӗрлесе тата аталантарса халӑх патне ҫитерекенсен пултарулӑхне те уйрӑммӑн палӑртас килет. Вӗсем ҫаксем: И.Мельниковпа В.Кашин, Н.Харитоновпа Ю.Афонин, Д.Новиковпа Л.Калашников, Н.Коломейцевпа С.Савицкая, Н.Арефьевпа К.Тайсаев, О.Смолинпа Н.Иванов, Н.Останинапа Ю.Синельщиков, В.Соболевпа Н.Осадчий, С.Казанковпа А.Куринный, Г.Камневпа В.Исаков, депутатсен пӗтӗм ушкӑнӗ.

Пирӗн Ҫӗнтерӳ Программи халь тытса пыракан политикӑна ырӑ улшӑнусем кӗртме хистет. Вӑл ҫынсен пурнӑҫ шайне тӗпрен лайӑхлатмалли, патшалӑха ҫӗнӗлле аталантарса ҫирӗплетмелли, унӑн тӗнчери вырӑнне тата авторитетне ҫӗклемелли, халӑхсен туслӑхпа тӑванлӑх туйӑмне ӳстермелли ҫӑлкуҫ пулса тӑрать. Халех, ним тӑхтавсӑр татса памалли ҫак ыйтусем тухса тӑраҫҫӗ:

**– пысӑк пӗлтерӗшлӗ отрасльсене халӑх аллине парасси (национализаци);**

**– вӑрах вӑхӑт валли социаллӑ пурнӑҫпа экономикӑна планласси;**

**– олигархсене экономикӑпа ертсе пырассинчен пӑрасси;**

**– патшалӑх енчен анлӑ технологиллӗ экономикӑна, наукӑна, вӗренӳпе сывлӑха сыхлас ӗҫе, укҫа-тенкӗ хывассине курӑмлӑ ӳстересси;**

**– ҫӗршыври укҫа- тенкӗпе капитал юта каяссине чарса лартасси;**

**– халӑх предприятийӗсемпе пӗрлешӳллӗ коллективсене пур енлӗн пулӑшса пырасси;**

**– халӑх пурнӑҫне тӗпренех лайӑхлатасси, пурне те наукӑпа культура тата спорт ҫитӗнӗвӗсемпе усӑ курма анлӑ майсем уҫса парасси.**

**Раҫҫей халӑхӗ аслӑ ҫӗршывра ирӗккӗн тата тулӑх пурӑнма тивӗҫ!**

НИКИТАПА (МИНЧУРПА) КАЛАҪНИНЧЕН

# Фронтра – хӗрӳ хирӗҫтӑру, Грудинин патӗнче – лӑпкӑлӑхпа хӗрӳ ӗҫ

Тепӗр эрнерен вӑл 23 ҫул тултарать. Сентябрьтен вара – ятарлӑ ҫар операцийӗнче. Килӗшӳ тунӑ та ӑҫта янӑ – ҫавӑнта ҫитнӗ. Службӑна ӗҫ вырӑнӗ тесе шутлать. Вӑл хӑҫан вӗҫленессине пӗлмест. Ҫар вӑрттӑнлӑхӗ.

Никита нумаях пулмасть коммунист-депутатсемпе пӗрле КПРФ Раҫҫей Президентне суйлама тӑратнӑ кандидатпа Николай Михайлович Харитоновпа тата суйлав штабӗн ертӳҫипе Геннадий Андреевич Зюгановпа пӗрле В.И. Ленин ячӗллӗ совхозра иртнӗ тӗл пулӑва хутшӑннӑ. «Питӗ чаплӑ», – тенӗ вӑл, хӑй тӗлӗннине пытармасӑр.

Чӑннипе илсен, Минчур, ытти профессиллӗ ҫар ҫынни пекех, сӑмах ваклама юратмасть. «Советская Россия» хаҫата интервью пама килӗшсен те хӑйӗн «ӗҫӗ» пирки пурне те уҫса памасть. «Манӑн биографи пуянах мар-ха», – тесе ҫеҫ палӑртрӗ вӑл.

– Эпӗ Ставрополь крайӗнчи Буденновскран, – палӑртрӗ вӑл. – 9 класс пӗтернӗ хыҫҫӑн ҫемье Ставрополе куҫрӗ те, вунпӗр класс пӗтерсен ҫар училищине вӗренме кӗтӗм. Анчах ӑна пӗтерме май килмерӗ. Лейтенант пулса тухатӑмччӗ. Кӑштах гражданкӑра пултӑм. Ҫапах та ҫар службӑи хӑй патнех туртрӗ. Атте те ҫар ҫынни пулни тата ятарлӑ ҫар операцине хутшӑнни пӗтӗмпех тыткӑна илчӗ. Вӑл мана хӑй патне чӗнсен ҫийӗнчех килӗшрӗм. Халӗ иксӗмӗр те Мариуполь таврашӗнче ӗҫлетпӗр.

**– Ҫар ӗҫӗнче мӗн ытларах туртать сана?**

– Чӑнлӑха тата тӗрӗслӗхе тӗпе хуни.

**– Сире Украинӑн тыткӑна лекнӗ салтакӗсемпе тӗл пулма тӳр килнӗ-и?**

– Пулнӑ ун пеккисем. Вӗсенчен чылайӑшӗ Раҫҫей майлӑ шухӑшлать. Вӗсем йывӑр вӑхӑтра командирӗсем час-часах хӑйсене пӑрахса тарни ҫинчен пӗлтерессӗ.

**– Эпир пӗлнӗ тӑрӑх, эсир Раҫҫей ҫамрӑкӗсен ҫырӑвӗсемпе те ӗҫлетӗр...**

– Питӗ интереслӗ вӗсене вулама. Вӗсенчи ӑшӑ сӑмахсем чуна ҫӗклеҫҫӗ. Пӗри уйрӑмах тарӑн шухӑшлӑ ҫырни савӑнтарчӗ. Таҫтан лекнӗ телефон урлӑ унӑн хуҫи Анапӑра вӗренекен Лиза пулнине шыраса тупрӑмӑр. Час-часах килекен ҫырусем, ӑшӑ сӑмахсем пире хавхалану кӳреҫҫӗ.

**– Эсир коммунистсемпе пӗрле Ленин ячӗллӗ совхозра пултӑр. Хӑвӑр парти членӗ-и?**

– Ҫук-ха. Анчах коммунистсем патне чун туртать. Мӗншӗн тесен, вӗсенчен чылайӑшӗ вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенченех ятарлӑ операцие хутшӑнать. Вӗсем хӑйсен паттӑрлӑхӗпе тата хӑюлӑхӗпе палӑрса тӑраҫҫӗ. Унта лекменнисем салтаксемпе офицерсене курӑмлӑ пулӑшу параҫҫӗ, вӗҫӗмсӗрех мӗн кирлине ярса параҫҫӗ.

**– Ятарлӑ операцие хутшӑнакансем Аслӑ Ҫӗнтерӳ, КПРФ тата СССР Хӗрлӗ ялавӗсене мӗнле хаклаҫҫӗ?**

– Хӗрлӗ ялав – пирӗншӗн чи таса символ. Вӗсем асаттесемпе аттесене Ҫӗнтерӳ тума пулӑшнӑ, хаяр тӑшмана аркатса мирлӗ пурнӑҫ парнеленӗ.

**– Эсир совхозра тӗрлӗ ҫӗрте пулса куртӑр. Мӗн курнине-туйнине мӗнле хаклатӑр?**

– Ытарма ҫук лайӑх! Пурте пире хӑйсен тӑванӗ пек ӑшшӑн йышӑнни, хисеплени, хӑвӑртрах Ҫӗнтерӳ тума хистет, чыслӑ ӗҫре паттӑрлӑх кӑтартма чӗнет. Совхозра тин ҫуралнӑ ачасенчен пуҫласа ватти таран – пурин валли те – мӗн кирли пурте пур. Ӗҫлекенсем вӑтамран уйӑхсерн 120 пин тенкӗ ытла илни, совхоз пӗр тӳлевсӗр туса панӑ хваттерсенче ирӗкленсе пурӑнни ырлӑх мар-и? Тӳлевсӗр вӗренӳ, спорт керменӗсемпе бассейнсем, ку чухнехи тренажерсем, тӳлевсӗр апат мӗне тӑраҫҫӗ. Шкулта мӗнле профессисене алла илме хӑнӑхтарни ҫинчен ыйтрӑм та ҫийӗнчех хуравларӗҫ: вуннӑ ытла – тухтӑр, айти, робототехника... Кӑҫал анчах парта хушшине ларнӑ вунӑ пӗрремӗш класс ачисен (виҫҫӗре яхӑн вӗсем) куҫӗсем ҫӑлтӑр пек савӑнӑҫпа ҫиҫеҫҫӗ.

Павел Иванович Грудинин пирки калас пулсан, вӑл пӗтӗм вӑйне халӑх валли ырӑ пурнӑҫ тӑвас тесе парать, ывӑнма пӗлми ӗҫлет.

**– Президент суйлавӗ ҫывхарса пырать. Ҫар ҫыннисене суйлава яланах стройпа илсе кайса сасӑлаттараҫҫӗ...**

– Эпӗ сасӑланӑ ӗнтӗ. Камшӑн сасӑланине никам та сӑнаса тӑман. Пӗлместӗп пӗтӗмӗшле суйлав мӗнле иртессине. Анчах эпӗ КПРФӑн пысӑк ӗҫне хам куҫпа курса ӗнентӗм. Коммунистсен партийӗ халӑх шанӑҫне тивӗҫ. Вӑл, чӑннипех те, ҫӗршыва ҫӗнӗрен чӗртсе тӑратакан парти.

**Галина ПЛАТОВА.**
**(Калаҫӑва кӗскетсе пичетленӗ).**

# Шухӑшламалӑх пур



А.П.Павлов мӑшӑрӗпе

Эпӗ – парти ветеранӗ. Ӗҫ стажӗ те ҫур ӗмӗр ытла. Маларахах тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ та, пенси, инвалид пулнине те хушса панӑран, ҫитсе пырать темелле. Паллах, кунта хамӑр пахчарах ҫӗрулмипе ытти ҫимӗҫсем ҫитӗнтерни те, кӑштах выльӑх-чӗрлӗхпе кайӑк-кӗшӗк тытни те самай хута кӗрет.

Анчах ачасемпе мӑнуксен шӑпи самаях шухӑшлаттарать. Хальтерех кӑна Шупашкарта, вӗсем патӗнче, пурӑнса килтӗм те, паянхи ҫамрӑк ҫемьесен пурнӑҫӗ пӗрре те ҫӑмал маррине тата лайӑххах ӑнлантӑм. Пасара е лавккасене тухса кӗрсенех малашне мӗнле перекетлӗрех пулмалли пирки пуҫ ватаҫҫӗ. Вӗсен шӑпи мана та, урапа ҫинче кӑна ларакансене, хытӑ хумхантарать. Мӗншӗн тесен, куллен тенӗ пек хаҫат-журналта та, телекуравран та малашлӑх мӗнле пулассине уҫӑмлӑн пӗлсе пӗтерме ҫукрах. Экрансенче кунӗн-ҫӗрӗн пӗр-пӗринпе тавлашнине кӑтартни нервсене тата та хускатарах парать.

Чӑн та, Владимир Путин Президент Раҫҫейре пенсисемпе пособисем, ӗҫ укҫипе пулӑшусем ытти патшалӑхсенчинчен хӑвӑртрах ӳсни, малашне те хушӑнсах пырасси ҫинчен тӑтӑшах калать. Ытти партисен ертӳҫисем те «Эпир – халӑхшӑн!», – тесе ҫирӗплетеҫҫӗ.

Анчах халӑх ытларах куракан е вулакан информаци хатӗрӗсенче КПРФ ӗҫӗ пирки сайра та сахал хыпарлаҫҫӗ. Апла пулин те мана, вун-вун ҫул КПСС, каярахпа КПРФ ретӗнче тӑракан, ылмашӑнмасӑр вырӑнти пуҫламӑш организацие ертсе пыракан ҫуллӑ ҫынна, Раҫҫейри Коммунистсен партийӗ кӑна хӑйӗн программине пур енчен те тӗплӗн шутласа тата тарӑннӑн шухӑшласа тунӑн туйӑнать. Куратӑп та, туятӑп та Президент пулма кандидата тӑратнӑ Николай Харитонова пур ҫӗрте те ӑшшӑн йышӑнаҫҫӗ. Вӑл татӑклӑ ӗҫсен тата йышӑнусен программипе тухни чӗрене лӑпкӑлӑх тата ырӑлӑх кӳрет.

Мӗншӗн тесен вӑл, халӑх шанӑҫне тивӗҫтерекен ҫӗнӗ правительствӑпа пӗрле ҫӗнетнӗ социализм системине, калама ҫук хӑватлӑ, пур енчен те тӗреклӗ пулнӑ Совет влаҫне чӗртессӗн. Ҫапла вара халӑха ун чухнехи ырлӑха – сакӑр сехетлӗ ӗҫ кунне, тӗпрен илсен кану тата сывлӑха сыхлас ыйтусене профсоюзсен урлӑ татса парасшӑн. Пуринчен те курӑмли вара халӑхӑн пысӑк йышӗн шухӑшне шута илмесӗр йышӑннӑ пенси реформине пӑрахӑҫласси. Ара, арҫынсенчен 60 процентӗ ытла тивӗҫлӗ канӑва тухса ӗлкӗреймесӗрех вилет те. Хӗрарӑмсем те чылайӑшӗ алла пенси тытса кураймасть. Ҫавна тата ытти йывӑрлӑха пула ҫӗршыври халӑх йышӗ ҫулсеренех ҫур миллион ҫын таран чакать.

Патшалӑх Думи «Пӗрлӗхлӗ Раҫҫейри» депутатсен ытларах сассипе йышӑннӑ ҫитес виҫӗ ҫуллӑх программӑра (укҫа-тенкӗ йӳнелнине тата йӳнелессине шутласан) нимле ырӑ улшӑну та пулаймасть пек туйӑнать. В. Сафронов «Советская Россия» хаҫатра ҫырнӑ тӑрӑх (2024 ҫулхи нарӑсӑн 15-мӗшӗ), 2023 ҫулхипе танлаштарсан, пӗтӗмӗшле наци экономикине тата ял хуҫалӑхне хывакан чӑн укҫа-тенкӗ 25, халӑх вӗренӗвне каяканни – 27, сывлӑх сыхлавне – 10 процент чакать.

**Александр ПАВЛОВ.**
**Елчӗк округӗ, Тӗмер.**

## Канлӗх кӗтет чун-чӗре

Ҫур ӗмӗр пурӑнтӑмӑр лӑпкӑ,
Ырӑ пуласлӑха шанса.
Пӗрлешӳре, хӗрӳ ӗҫре
Тапатчӗ халӑхӑн хӑвачӗ.
Ҫӗршывӑм пысӑк хисепе
Чыспа ҫӗнсе илме пултарчӗ.
Анчах...
Кӗтмен ҫӗртен хӗвел хупланчӗ
Сутӑнчӑксен ӗҫне пула.
Кӗтменлӗх...
Халӑх сапаланчӗ
Чӑн-чӑн кӗтӳҫ ҫукне пула.
Паян пурте савӑнаймасть,
Ӗҫхалӑх хисепе ҫухатрӗ.
Ӗҫсӗрлӗх пурнӑҫа туллать,
Суту-илӳ ҫынна тухатрӗ.
Яшсемшӗн чунӑм ыратать,
Ырӑ пуласлӑх курӑнмасть.
Ни вӗренни шанӑҫ памасть,
Пуласлӑхӗ те курӑнмасть
Ӗҫсӗрлӗх ӗмӗте хуҫать,
Яш-кӗрӗме йӑлтах пӑсать
Часрах тухасчӗ ырӑ ҫул ҫине,
Пӗрле утасчӗ килӗшӳ енне.

**Дарья СМИРНОВА.**

# Елчĕк ен геройсемпе пуян



Елчĕк ен – тахçантанпах республикăра курăмлă округсенчен пĕри. Хăй вăхăтĕнче Сăрьел ялĕнчи Абдулла Гаязович Гаязов, маларах партипе совет ĕçченĕ пулнăскер, 17 çул «Марс» колхоза ертсе пырса, ăна çĕршывĕпех чапа кăларнă. Пусăрулла та пултарулла ертӳçĕ вăйлă тăрăшнăран хуçалăх тăтăшах уй-хиртен тата выльăх ĕрчетнинчен пысăк тухăç илнĕ. Колхозниксем те чăн-чăн пуянсем пулнă (вăл вăхăтрипе танлаштарсан, паллах). Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче хуçалăх «Колхозник Чувашии» танк колонни тума 175 пăт тырă тата 105 пин тенкĕ укçа хывнă. Абдулла Гаязович хăй тата çемйи вăйĕпе çар самолечĕ туянса Совет Союзĕн Геройне А. В. Кочетов летчик-истребителе парнеленĕ. Çакăншăн хастар та хăюллă ертӳçĕ Тĕп Çар Командующийĕн И.В.Сталин маршалăн тавне тивĕçнĕ.

Хĕрӳллĕ патриот – ертӳçĕн пусăрăвĕ пуриншĕн те пурнăçра тĕрлĕ енлĕн паттăрлăх кăтартмалли тĕслĕх пулса тăнă. Халăх фронта пулăшас енĕпе хавхаланса ĕçленĕ, вăрçăра çапăçакансем вара хăйсене хĕрхенмесĕр тăшмана хирĕç кĕрешнĕ. Вĕсенчен виççĕшне – А.Ф.Беляев гварди полковникпа С.А.Андреев гварди сержанта (вилнĕ хыççăн) тата Н.П.Иванов майора Совет Союзĕн Геройĕн ятне панă. Çавсенчен пĕри – Николай Петрович каярахри çапăçусенче тата виçĕ хутчен Хĕрлĕ Ялав тата пĕр хутчен Ленин орденĕсене тивĕçнĕ.

Геройсен тĕслĕхĕ тата паттăрлăхĕ вăрçă хыççăнхи çулсенче те хавхалану çăлкуçĕ пулса тăнă. Мирлĕ саманара та халăх ырми-канми ĕçлет тата çĕршыва тĕреклетессишĕн тар тăкать. Çакна Елчĕк ен çĕрĕ çинче тăрăшакансен хушшинчен Социализмла Ĕç Геройĕсем вуннăн таранчченех тухни те аван çирĕплетет. Вĕсенчен чылайăшĕ вилнĕ пулсан та çамрăксене, çитĕнекен ăрăва çунатланса ĕçлеме чĕннĕн туйăнать.

Ахальтен мар ĕнтĕ паян та чăн-чăн патриотсен йышĕ хушăнсах пырать. Аслă ăрусен тĕслĕхĕ вĕсене халĕ Украинăра пыракан çар операцийĕнче паттăрлăхпа пусăрулăх тата хăюлăх кăтартма хистет. Кашниех хăйĕнчен хăй çапла ыйтать: «Эпĕ пулмасан – кам çĕнтерĕ куллен сĕмсĕрленекен тата вăй илме хăтланакан фашизмпа нацизма?»

Çавна пулах ĕнтĕ сывлăхлă та тĕреклĕ çамрăксенчен е запасри çар çынниcенчен чылайăшĕ унта хăй ирĕкĕпех каять Украинăра тымар янă бандеровецсемпе вăрçă шухăшлă, халĕ тăшман пулса тăнă вăя хирĕç çапăçма тата вĕсене пӳлсе пыма. Куратпăр, сисетпĕр вĕсем тĕллеве ăнăçлăн пурнăçлас тесе хăюллăн кĕрешнине. Çĕнтерӳ пуласси те пурте шанса тăратпăр. Çав вăхăтрах е пĕр яла, е теприне вилнисем «тавrăннине» илтсен тата çĕре чиксен пурин те кусçуль тухать, чĕри чăтмалла мар сурать. Шăпах çавна чăтаймасăр хăйсен пурнăçне хĕрхенмесĕр çапăçççĕ пирĕн салтаксем. Вĕсенчен пĕри – республикипех пĕлекен, Раççей Федерацийĕн Геройĕ ята тивĕçнĕ Николай Алексеевич Петров аслă лейтенант.

Вăл 1999 çулхи сентябрĕн 24-мĕшĕнче çуралнă. Елчĕкри вăтам шкула, Мускаври пĕтĕмĕшле çар командин аслă училищине пĕтернĕ. 136-мĕш уйрăм гварди мотострелковăй бригада йышĕнче малтанхи кунсенченех




Украинăри ятарлă çар операцине хутшăннă. 2023 çулхи мартăн 15-мĕшĕнче пĕр çапăçура вилмеллех аманать. Николай Петров аслă лейтенанта, çапăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн «Çапăçура палăрнăшăн» медальпе, Паттăрлăх орденĕпе, Раççей Президенчĕн 2023 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшӳллĕн, Раççей Федерацийĕн Геройĕ ятне панă (вилнĕ хыççăн).

Чăваш Республикин Суйлав комиссийĕн 2023 çулхи декабрĕн 14-мĕшĕнчи постановленийĕпе килĕшӳллĕн, Тускелĕнчи 2402 номерлĕ суйлав участокне çак ялта çуралса ӳснĕ Раççей Федерацийĕн Геройĕ Петров Николай Алексеевич ятне панă. Çавна май чылай çын районри ертӳлĕхĕпе пĕрле нумай функциллĕ культура центрне пухăннă. Унта муниципаллă округ ертӳçи Л.В. Левый хумханупа сăмах калать. Кĕçех зала Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин ялавĕсене сумлăн илсе кĕреççĕ. Пултарлăх ушкăнĕсен пĕрлештернĕ хорĕ ятарласах Николай Петров Героя халалласа Галина Каринкинан «Пус таятпăр пурте» сăвvипе Иван Шурбин кĕвĕленĕ юрра янратать. Чуна, пĕтĕм кăмăла хускатакан тата тыткăнлакан кĕвĕ чĕрере мăнаçлăхпа çирĕплĕх вăратать, çĕршыва хӳтĕлекен чăн-чăн паттăрсем кирлине ĕнентерет, пуласлăха шанчăклăн пăхма хистет.

**Анатолий ТИМОФЕЕВ.**

# Кун пекки те пулать

Январь уйăхĕнче Патшалăх Думин депутачĕсем Олег Смолин (КПРФ) темиçе çултанпа тăратнă сĕнĕве Раççей Федерацийĕнчи «Вĕренӳ çинчен» Закон статйине вĕренекенсен стипендине тапхăрăн-тапхăрăн ӳстерессип çинчен хушса çырас ыйтăва пăхса тухнă.

Сӳтсе-яву самая пынă. Унта мĕнпур фракцисен элчисем тухса калаçнă, пурте тенĕнех Закон проектне ырланă. Анчах... Стипендисене ӳстерес текенсем ытларах (çурри ытла) сасă пухайман. Коммунист-депутатсем (пĕтĕмпех) тата пĕчĕк фракцисен хăш-пĕр членĕсем кăна вĕренекен çамрăксене пулăшас тĕллевне татăклăн палăртнă. Анчах вĕсем пĕтĕмпе те 116-ăн кăна пухăннă. Ытти 300 депутат (пĕтĕмпех «Пĕрлĕхлĕ Раççейрен») хăйсен умĕнчи кнопкăсене пусман. Çапла вара, Патшалăх Думинчи калаçу – сăмахсен витĕмĕ пысăк ала çине шыв янăн çеç килсе тухнă. Çав вăхăтрах халăх хăй суйланă депутатсенчен чылайăшĕ çавăн чухне сăмах ваклакан çеç пулнине манса каймĕ.

**Хăш-пĕр студентсем пурăннăшăн тӳлеме тата ĕçме-çиме ăçтан укçа тупмалла-ши тесе калаçу пусăрнă. Вĕренекенсем хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр укçалла арçынсемпе çыхланма та пултараççĕ-мĕн.** А.Смолин çавăн пек çирĕплетнĕ: «Тен, çак йĕркесем пирĕн пата килнĕ капитализмпа пĕрле варшăнса çитнĕ?»

Иван Иванович Мельников коммунист-депутат хăй 90-мĕш çулсен вĕçĕнче Тĕнче банкĕ пуçтарнă семинарта, Будапештра хутшăнни пирки каласа кăтартнă. «Унта вĕренĕве пур çĕрте те тӳлевлĕ тумалли çинчен хĕрӳн калаçрĕç. Эпир каçпа хăна çуртне таврăннă чухне вара пире тĕрлĕ тĕслĕ ӳтлĕ хитре хĕрсем сырса илчĕç. Тепĕр кунне эпĕ Тĕнче банкĕнчи ĕçтешсенчен çапла ыйтрăм: «Тен, Венгрире вĕренӳ пĕтĕмпех тӳлевлĕ пулнăран хăйсене çăмăл тытакан хĕр-упраçсем ытларах?»... Çакăн хыççăн мана банксен семинарĕсене чĕнме пăрахрĕç.

Сасăлавсен пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх, ыйтăва майлă татас тесе «Тĕрĕс Раççейре» ЛДПРăн хăш-пĕр депутачĕ тата никама пăхăнман Оксана Димитриева кăна хутшăннă. «Пĕрлĕхлĕ Раççейсене» вĕсемпе тăтăш ĕçлекен Р. К. «Сасăламалла мар» тесе хушнă пирки уççăнах пĕлтерет «Советская Россия» хаçатăн чăнлăха тата тасалăха юратакан корреспонденчĕ Галина Платова.

**«Буржуйсем çакăн хыççăн Олег Смолин тата КПРФăн пĕтĕм фракцийĕ аллисене усаççĕ тата студентсен, вĕрентекенсен, ашшĕ-амăшĕсен интересĕсене хӳтĕлесси çине алă сулаççĕ тесе ан шутлаччăр, – систерет хăюллă корреспондент. – Кĕрешӳ малалла пырать. Вăл хамăр студентсене, пулас ученăйсене, врачсене, инженер-конструкторсене тивĕçлĕ стипенди пама йышăнмасăр та лăпланмасть».**

Чăнлăх
(Правда)
Учредитель – «Раççей Федерацийĕнчи Коммунистсен партийĕ» политика партийĕн Чăваш Республикин уйрăмĕ
Тĕп редактор А.А.ТИМОФЕЕВ

Хаçата çыхăну сфери, информаци технологийĕсем тата массăллă коммуникацийĕсем енĕпе ĕçлекен федераллă служба Чăваш Республикинчи управленийĕнче регистрациленĕ.

Регистраци свидетельстви ПИ №ТУ 21-00407, 2016 çулхи июлĕн 18-мĕшĕ

Хаçатра илсе кăтартнă фактсемпе пĕлтерӳсемшĕн авторсем яваплă. Ал çырăвĕсемпе ытти материалсене регистрацилемеççĕ, авторсене тавăрса памаççĕ.

Материалсене илсе пичетленĕ чух пирĕн хаçат ятне асăнмалла.

Редакци тата издатель адресĕ: 428024, Чăваш Республики, Шупашкар хули, Мир просп., 82 А çурт, тел.: 8 (8352) 28-99-91 e-mail: kprfpress@bk.ru

Хаçата «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ. Адресĕ: 428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И.Я.Яковлев просп., 13-мĕш çурт.
Тираж 15000 экз. Заказ № 374
Хаçат тӳлевсĕр саланать.